24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ДЕКАБРЬ 19 ЭРНЕКУН 299 (6014) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр.

ВКП(б) ОКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛ. КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ÇУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çаран войсковой чаçĕсемпе соединенийĕсене наградăласси çинчен

Немĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн çаксене награда́лас:

Хĕрлĕ Ялав орденĕпе:

5-мĕш стрелковăй дивизине
191-мĕш стрелковăй дивизине
46-мĕш танковăй бригадăна
Авиацин 185-мĕш истребительнăй полкне
Çăмăл артиллерин 127-мĕш полкне
6-мĕш минометнăй гвардейски дивизиона
184-мĕш уйрăм сапернăй батальона.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ А. ГОРКИН.

1941 çулти декабрĕн 17-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çаран начальство тата рядовой составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Немĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа паттăрлăх кăтартнăшăн, **Ленин орденĕ** тата **«Золотая звезда»** медалĕ парса, çаксене **Совет Союз Геройĕн звание** парас:

Кĕçĕн лейтенанта Василий Михайлович **Зайцева**
Лейтенанта Иван Максимович **Кошкарова**
Политрука Михаил Кузьмич **Кузьмина**
Красноармееца Елизар Максимович **Мананова**
Лейтенанта Василий Димитриевич **Панфилова**
Старший лейтенанта Михаил Евгеньевич **Котикона**
Кĕçĕн сержанта Андрей Иванович **Рашуткина**
Старший лейтенанта Александр Петрович **Силантьева.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ А. ГОРКИН.

1941 çулти декабрĕн 17-мĕш.

Хĕрлĕ Çаран начальство тата рядовой составне СССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене парас наградăлани

Немĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене, кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çаран начальство тата рядовой составĕн группине награда́ланă:

Ленин орденĕпе—32 çынна.
Хĕрлĕ Ялав орденĕпе—282 çынна.
Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе—241 çынна.
«За отвагу» медальпе—94 çынна.
«За боевые заслуги» медальпе 92 çынна награда́ланă. (ТАСС).

Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕ Чойболсан Сталин юлташа саламлани

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИНА

Улан-Батортан.

Немĕçсен фашистла захватчикĕсен кăвăл-хурахла кĕтĕвĕсене çĕмĕрсе пыракан геройла Хĕрлĕ Çар, Эсир ертсе пынипе, Мускав патне пымалли выранченче чаплă çĕнтерӳ тунă ятпа Сире, Оборонăн Халăх Комиссарне, Совет Правительствин Пуçлăхне тата Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне, Сирĕн урлă мĕнпур геройла Хĕрлĕ Çара, Мускав хулине паттăрăн хӳтĕлекенсене тата пĕтĕм совет халăхне мĕнпур Монголи халăхĕн ячĕпе пĕтĕм чĕререн хавасланса ырă сывлăх сунатăп.

Хĕрлĕ Çар тăшмана хăватлăн пыраппыра çални пире çĕнĕ вăй-хăват кӳрет, пирĕн халăхăн тăшмана татăклăнах çĕнтерес шанчăкне татах та ытларах çирĕплетет.

Мĕнпур Монголи халăхĕн ячĕпе эпĕ Сире çакна шантарса калатăп: фашистла захватчиксене пĕр сын юлмиччен вĕлерсе пĕтерес вăхăта сывхартассишĕн хамăр енчен фронта пулăшса тăрас ĕçе эпир вăйсене хĕрхенмесĕр ӳстерсе пырăпăр.

Хĕрлĕ Çаран геройла боецĕсем, командирĕсемпе политработникĕсем сывă пулччăр!

Фашизма татăклăнах çĕнтерес ĕç сывă пултăр!

Сывă пултăр Сталин!

Монголи Халăх Республикин Премьер-министрĕ, Монголи Халăх Республикин Геройĕ тата Маршалĕ ЧОЙБОЛСАН.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсем Калинин хулине йышăннă чухне тытса илнĕ трофейăсем

Малтанлăха шутласа тухнă тулли-мар даннăйсем тăрăх, Калинин фронтĕнчи пирĕн войскăсем Калинин хулине йышăннă чухне немĕçсенчен çанăн пек трофейăсем тытса илнĕ: тĕрлĕрен калибрлă 190 оруди (вăл шутра 12 дюймлă 4 йывăр оруди), 31 танк, 9 самолет, пине яхăн автомашина, 160 миномет, 303 пулемет, 292 автомат, 1.300 велосипед, 47 мотоцикл, 4500 винтовка, 21.000 снаряд, 12.500 мина, 5.000 ытла патрон, 18 радиостанци, 4 боевой ялав.

Кунсăр пуçне боеприпассен икĕ складне, обмундировани складне, урапасем, кабель тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ. Трофейăсене шутласа тухас ĕç малалла пырать.

Калинин районĕнчи çапăçусенче немĕçсен офицерĕсемпе салтакĕсем, пĕр вилнисене шутласан кăна, 10.000 çын ытла пĕтнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Тăшман ирĕксĕрех йышăнни

Немĕçсен 61-мĕш мотопехотнăй дивизийĕнчен тытăна лекнĕ обер-фельдфебель Вельбеш Хĕрлĕ Çар Ростова тата Тихвина илни фашистла салтаксене шиклентерсе ӳкерни çинчен каласа парать.

«Немĕçĕн халхи çыннине çакăн пек тунă, вăл шухăшламасть тата хăйĕн шухăшĕ пирки калаçмасть, ăна мĕн хушинне кăна пурнăçа кĕртет. Анчах халĕ каялла чакнă чухне, эпир ирĕксĕрех — пире мĕн кĕтет-ши, тесе шухăшлатпăр. — Немĕн те лайăхи çук». Çапла калать фельдфебель.

Тытăна лекнĕ салтаксем çумĕнче çырусем нумай тупнă, çав çырусем гитлерла вăрă-хурахсен çарĕ мораль тĕлĕшĕнчен ишĕлсе пынине кăтартса тараççĕ. Немĕçсен 18-мĕш мотопехотнăй дивизийĕн 6-мĕш ротинчи ефрейтор Гергард Краль хăйĕн ăрăмĕ патне Германие çапла çырать:

«Çакă ылханлă хĕвелтухăç похочĕ пире мăй тараванх тăрантарчĕ. Çакăн пек сивĕре пире шӳт туса тăма май çук. Эсĕ эпĕ хам çуралнă куна мĕнле эрттерни çинчен ыйтатăн. Нихăçан хинчен те начар. Çав кун эпир сивĕ çĕрулми тата вырăссен свинецне çирĕмĕр. Эпĕ хам мĕншĕн çуралнă-ши тесе ӳпкелететĕп».

Д. РУДНЕВ.
С. ПОЛЯНОВ.

(«Правда», декабрĕн 17-мĕш).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 17-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă. Хĕвеланăç, Калинин тата Кăнтăр-Хĕвеланăç франчĕсен чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем, противника хирĕç хаярăн çапăçса, малалла куçса пынă, халăх пуçланакан чылай пунктсене, вăл шутра Алексин хулине (Серпухов патнелле кăнтăр-хĕвеланăçнерех) тата Щекино хулине (Тулăран кăнтăр еннерех) йышăнса илнĕ.

Декабрĕн 16-мĕшĕнче немĕçсен 7 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Болдин генералăн войскисем, немĕç войскисене хирĕç малалла наступлени туса пырса, немĕçсен 296-мĕш пехотнăй дивизине çапса çĕмĕрес ĕçе вĕçне çитернĕ те декабрĕн 17-мĕшĕнче ирхине Щекино хулине йышăннă. Пирĕн войскăсем трофейăсем нумай тытса илнĕ. Трубников юлташăн часĕ кăна немĕçсенне 6 самолет, 35 танк, 4 оруди, 35 автомашина, 40 мотоцикл, темиçе вунтăп пин снаряд тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ. Болдин генералăн часĕсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче халăх пурăнакан 14 пункта немĕçсенчен ирĕке кăларнă.

* * *

Ясная Поляна районĕнчи çапăçусенче пирĕн боецсем немĕçсенне 11 танк, пĕр бронемашина, 119 автомашина, 1 çăмăл машина, 16 мотоцикл, 208 велосипед, 37 оруди, 43 пулемет, 21 миномет, лашасемпе пĕрле 46 урапа, пĕр самолет, 48.300 снаряд, 55 ещĕк мина тата 150.000 патрон тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç франчĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Анисимов юлташăн часĕ пилĕк кун хушшинче немĕçсене халăх пурăнакан 11 пунктран хăваласа кăларнă, 4 танк, 2 бронемашина, 3 оруди, 242 автомашина, 45 мотоцикл тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

К. юханшыв урлă каçма тăнă тăшман фронтин атакине пулеметчик-гвардеец Степенко юлташ хăйĕн расчечĕпе сирсе пăрахнă. Нумай сехет хушши пынă çапăçусем хыççăн немĕçсем каялла чакнă. Юханшыв хĕрринче немĕçсен 100 çынна яхăн вилсе выртса юлнă.

* * *

Мускав патне пымалли инçетри выранченче тăшманăн тылĕнче партизансен **«Фашистсене вилĕм»** ятлă отрячĕ ăнăçлăн кĕрешет. Юлашки вăхăтра çак отряд немĕçсен боеприпассемпе. çипуçсем турттарса пыракан темиçе лавне взрыв туса сирпĕнтернĕ, немĕçсен обозне çапса аркатнă тата фашистла автоматчиксен ушкăнне вĕлерсе пĕтернĕ. Р. ялĕ патĕнче партизансен отрячĕ немĕçсенчен боеприпассемпе хĕçпăшал турттарса пыракан 4 лава тытса илнĕ. К. юлташ командир пулса тăракан партизансен тепĕр отрячĕ противникăн утлă разведкине çапса çĕмĕрнĕ, немĕçсен 8 офицерĕ ларса пыракан штаб машинине, çавăн пекех тата тăшманăн ирĕксĕрех çĕр çине анса ларнă истребительне пĕтерсе тăкнă. Йĕлтĕрçĕ-партизансем фашистсен вунтăп салтакĕсене, хăйсен часĕсенчен татăлса юлаканскерсене, пĕтере-пĕтере тăкарçĕ, тăшманăн автомашинисемпе танкĕсене çунтара-çунтара ярарçĕ. Д. районĕнче фашистсем стройран тухнă темиçе çĕршер автомашинăсемпе вунтăп танксене юсамалли база организациленĕ пулнă. Немĕçсен юсав ĕçĕнче ĕçлекен салтакĕсене вĕлерсе пĕтерсе, партизансем 45 автомашина тата 11 танк çунтарса янă.

* * *

Юлашки кунсенче тытăна илнĕ немĕç салтакĕсем Германи çарĕнче проповедь парса тăрас ĕç начарланнăçемĕн начарланса пыни çинчен каласа параççĕ. Немĕçсен 7-мĕш пехотнăй дивизин 19-мĕш полкĕнчен тытăна лекнĕ Иосеф Шварцейнштайнер ефрейтор çапла каласа панă: «Пирĕн часе апат-çимĕç парса тăрасси юлашки вăхăтра татах та япăхланчĕ, эпир яланах выçă ларатпăр», — тенĕ. Немĕçсен 87-мĕш пехотнăй дивизийĕн 187-мĕш полкĕнчи Фриц Гельбик салтак çапла каласа парать: «Пирĕн апат-çимĕç питех те начар, ун пек апат-çимĕçпе пурăнма май çук. Çакăн çинчен эпир хамăран взвод командирне каласа патăмăр, анчах вăл пире продовольстви тĕлĕшпе халĕ Германире те ĕç питĕ япăхланчĕ, малалла татах та ытларах япăхланĕ, тесе ответлерĕ. Çапла «йăпатрĕ» вăл пире. 7-мĕш пехотнăй дивизин 61-мĕш полкĕнчи Георг Штейнмайер çапла каласа парать: «Апат-çимĕç начар пирки тата вăл çителĕксĕр пирки пирĕн ротăри салтаксем вар-хырăм чирĕпе нумай чирлеме пуçларĕç». 78-мĕш пехотнăй дивизин 215-мĕш полкĕнчи 3-мĕш батальонри Мартин Гобер ефрейтор çапла пĕлтернĕ: «Апат-çимĕç пирĕн питех те япăх. Юлашки пилĕк кун хушшинче пире çăкăр пачах та паман. Пирĕн батальонра вар-хырăм чирĕсемпе чирленисен шучĕ 30 процентран иртет».

* * *

Декабрĕн 15-мĕшĕнче Совет Информаци Бюровĕ пирĕн войскăсем Ясная Полянăна, пирĕн аслă писатель, вырăссен тата пĕтĕм тĕнче литературин классикĕ Лев Николаевич Толстой пурăнса ирттернĕ тата ăна пытарнă вырăна, йышăнса илни çинчен пĕлтернĕччĕ. Л. Н. Толстойăн музейĕ пулса тăракан çуртра ĕçлекен научнăй работниксемпе рабочисем, çавăн пекех тата вырăнти колхозниксемпе учительсем Лев Николаевич Толстоя асăнса пурăнмалли япаласемпе çурт-йĕрсенчен гитлерла ирсĕрсем çавтери тискеннисем мăшкăлласа пĕтерни çинчен декабрĕн 17-мĕшĕнче акт çырнă. Актра çакăн çинчен палăртнă. Ясная Полянăна пырса кĕнĕ малтанхи кунсенчен пуçласах немĕçсем çак музея çĕмĕрме тытăннă. Литература музейĕнчи экспонатсене фашистсем çаратса пĕтернĕ, Толстой çуртĕнче офицерсемпе вĕсен денщикĕсем валли казарма туса хунă. Халиччен архивсем тытса усранă мĕнпур шкафсене çĕмĕрсе пĕтернĕ. Толстойăн япалисене кăмакана пăрахса çунтарса янă. Толстой суха тунă сухапуçне фашистла хулигансем çĕмĕрсе, кăларса ывăтнă. Музейăн стенисем çине вĕсем намăс ӳкерчĕксем туса пĕтернĕ, Толстой хăйĕн «Война и Мир» романне çырнă чухне вĕçленĕ чаплă пӳлĕмрен фашистсем тасамар вите туса хунă. Писателĕн пӳлĕмĕсенче гитлеровецсем атă-пушмак çĕлемелли мастерской уçнă. Культура тĕлĕшпе историллĕ вырăн йышăнса тăракан аслă памятникрен çавтери тискеррĕн мăшкăлласа пĕтерни пире тытарас тесе, фашистсем, Ясная Полянăран тухса кайнă чухне, Толстойăн çуртне вут тĕртсе хăварнă. Музейра ĕçлекенсем пĕтĕм вăйне хурса тăрăшнипе пушара сӳнтернĕ. Л. Н. Толстойăн библиотеки пулнă пӳлĕм тата унăн сывăрмалли пӳлĕмĕ çунса кайнă. Немĕçсем ирĕксĕрлесе пусмăрланă Ясная Полянăри колхозницăсен хушамачĕсене, çавăн пекех тата Толстойăн чаплă шкулĕнче вĕреннĕ çынсен — Ясная Полянăри колхозниксен, фашистсем çакса тата персе вĕлернĕскерсен, хушамачĕсене те çав актра кăтартса панă. Акт айне çаксем алă пуснă: музея пăхса усракан С. И. Щеголев, ĕлĕк Толстойăн кучерĕ пулнă халĕ музей сторожĕ пулса ĕçлекен И. В. Егоров, Ясная Полянăри «Путь Ильича» ялхуçалăх артелĕн колхозницисем А. Я. Удовăпа Ядрова, Толстой ячĕпе тăракан шкулти учительницăсем С. А. Грацианская, Е. З. Соловьева тата фашистсен варварла çав тискер ĕçĕсене курса тăнă ытти нумай çынсем те алă пуснă.

Декабрĕн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 18-мĕш ырăн тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Генерал Рокоссовскийĕн войскисем, Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекенскерсем, противник вăйлăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе пырса, немĕçсене халăх пурăнакан чылай пунктсенчен хĕссе кăларнă. Пĕр кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн чассем 16 оруди, 67 автомашина, 5 пулемет, винтовкăсем, гранатăсем, авиабомбăсем, минăсем, патронсемпе ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн чассем, халăх пурăнакан темиçе вырăна йышăнса, немĕçсен 10 танкне, 10 бронемашинине, боеприпассен 7 складне тата ытти çар хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче темиçе кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн боецсем немĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 3.200 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, 15 оруди, 53 пулемет, 11 миномет тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Çапăçусенчен пĕринче кĕçĕн лейтенантăн Гцаловăн артиллери батарейи орудисенчен тĕл персе противникăн контратакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 900 çынна çити вилсе юлнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чассем пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 70 пункта немĕçсенчен ирĕке кăларнă, 28 тупă, 105 автомашина, 17 миномет тата ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ. Çав кун хушшинчех Русиновăн юлташăн гвардеецĕсем халăх пурăнакан 10 пункта йышăнса илнĕ.

Малалли 2-мĕш страницăра

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Строительствăра ĕçлекенсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăласси çинчен

Строительствăна активлăн хутшăнса ĕçлесе çав ĕçре хăйсене уйрăмах палăртнă колхозниксене, инженерно-технически работниксене тата партине совет работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе награда́лас:

Улатăр районĕ тăрăх

1. Петр Димитриевич **Борисова** — çĕр чавакана, Иваньково-Удельновски ялсоветне кĕрекен «Победа—Удельное» колхозри колхознике.

2. Иван Алексеевич **Вильдяева** — платнике, Алтышево ялсоветне кĕрекен «Заря» колхозри колхознике.

3. Илья Александрович **Киняшева** — бригадира, чугунçул çинче ĕçлекен рабочине.

4. Степан Григорьевич **Кочетикова** — бригадира, Улатăр хулинчи йывăç каскалакан 7—8-мĕш №-лĕ заводри рабочине.

5. Павел Матвеевич **Пылаева** — çĕр чавакана, Засурско-Безднински ялсоветне кĕрекен «Красное Анютино» колхозри колхознике.

6. Владимир Александрович **Сиротова**—çĕр чавакана, Улатăрти çăкăр комбинатĕнчи лабораторин заведующине.

7. Надежда Васильевна **Сильновăна**—бригадира, Улатăр хула Совечĕн исполкомĕ çумĕнчи ЦСУ инспекторнă.

8. Анна Григорьевна **Сысуйминăна**—çĕр чавакана, йывăç каскалакан 5-мĕш №-лĕ заводри рабочница.

9. Александра Даниловна **Трифоновăна**—çĕр чавакана, Улатăр хулинчи паровозсем юсакан мастерскойри работницăна.

10. Николай Иванович **Шереметьева**—Улатăр хулинчи чугунçул çинче ĕçлекен рабочине.

Чкаловски район тăрăх

11. Ариф Веллиулович **Амалеева** — платнике, Иккĕмĕш Чкаловски ялсоветне кĕрекен «Звезда» колхозри колхознике.

12. Хуснетдин Сайфутдинович **Булатова**—бригадира, Тутарла Тĕмеш ялсоветне кĕрекен «Красный Октябрь» колхоз председательне.

13. Гельцем Хабибуловна **Идрисовăна**—çĕр чавакана, Чкаловски ялсоветне кĕрекен «1-ое мая» колхозри колхознике.

14. Дмитрий Иванович **Куркина** — звено руководительне, Алманчă вăтам шкулĕнчи учителе.

15. Александра Федоровна **Петровăна**—çĕр чавакана, Яншихово ялсоветне кĕрекен Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри колхознике.

16. Елизавета Ильинична **Плешковăна**—çĕр чавакана, Çĕнĕ Ахпӳрт ялсоветне кĕрекен Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна.

17. Алимзян Сафиуллович **Рахматуллова**—бригадира, Тутарла Тĕмеш ялсоветне кĕрекен «Красный Октябрь» колхозри колхознике.

18. Минхаят Валитовна **Семеновăна**—звенозова, Пĕрремĕш Чкаловски ялсоветне кĕрекен «Ударник» колхозри колхозницăна.

19. Илларион Николаевич **Шакеева**—платнике, Тăрăн ялсоветне кĕрекен Роза Люксембург ячĕпе тăракан колхозри колхознике.

20. Никита Иванович **Шпарева** — иккĕмĕш стройучастокăн прорабне.

Елчĕк районĕ тăрăх

21. Вера Архиповна **Архиповăна** — çĕр чавакана, Байглычево ялсоветне кĕрекен «Комбайн» колхозри колхозницăна.

22. Егор Афанасьевич **Афанасьева** — çĕр чавакана, Аслă Елчĕк ялсоветне кĕрекен Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхознике.

23. Георгий Иванович **Емельянова** — бригадира, Елчĕк ялсоветне кĕрекен Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри колхознике.

24. Василий Сергеевич **Зубкова** — çĕр чавакана, Байглычево ялсоветне кĕрекен «Комбайн» колхозри колхознике.

25. Яков Егорович **Калинина**—çĕр чавакана, Аслă Елчĕк ялсоветне кĕрекен «Журавлевка» колхозри колхознике.

26. Евдокия Ивановна **Казначеевăна**—çĕр чавакана, Аслă Елчĕк ялсоветне кĕрекен Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна.

27. Тимофей Андреевич **Майкова** — бригадира, Аслă Елчĕк ялсоветне кĕрекен Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхознике.

28. Захар Максимович **Месякова** — çĕр чавакана, Аслă Елчĕк ялсоветне кĕрекен «Журавлевка» колхозри колхознике.

29. Фома Егорович **Светлова** — çĕр чавакана, Аслă Елчĕк ялсоветне кĕрекен Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхознике.

Тăвай районĕ тăрăх

30. Фекла Григорьевна **Григорьевăна**—çĕр чавакана, ЕнешĕНăрваш ялсоветне кĕрекен «Красная Чувашия» колхозри колхозницăна.

31. Федор Васильевич **Васильева** — производство бригадисен ответлă организаторне, Енешĕ-Нăрваш ялсоветне кĕрекен «Красная Чувашия» колхозри председательне.

32. Карп Егорович **Егорова** — звеновода, Енешĕ-Нăрваш ялсоветне кĕрекен «Красная Чувашия» колхозри колхознике.

33. Семен Кириллович **Кучерова** — звеньевоя, Тĕмер ялсоветне кĕрекен Смидович ячĕпе тăракан колхозри колхознике.

34. Алексей Сидорович **Сидорова** — платниксен бригадин бригадирне, Тăрмăш ялсоветне кĕрекен Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхознике.

35. Маркел Семенович **Сучкова** — бригадира, Кармалински ялсоветне кĕрекен «Комсомолец» колхозри колхознике.

36. Семен Александрович **Сельмина**—бригадира, Иваново ялсоветне кĕрекен «Звезда» колхозри колхознике.

37. Иван Федорович **Федорова** — десятнике, Йăнтăрч ялсоветне кĕрекен «Пламя» колхозри колхознике.

Шăхасан районĕ тăрăх

38. Василий Евгеньевич **Барсукова**—бригадира, Высоковски ялсоветне кĕрекен Чкалов ячĕпе тăракан колхоз председательне.

39. Александр Григорьевич **Григорьева**—çĕр чавакана, Шăхасан машинно-тракторнăй станцинчи тракториста.

40. Михаил Данилович **Данилова** — платниксен бригадин бригадирне, Ямаш ялсоветне кĕрекен «Парижская Коммуна» колхозри колхознике.

41. Николай Емельянович **Емельянова**—бригадира, Шăхасан ялсоветне кĕрекен «Красный Октябрь» колхозри колхознике.

42. Трофим Кириллович **Кириллова**—çĕр чавакана, Энтриел ялсоветне кĕрекен «Пинер» колхозри колхознике.

43. Иван Македонович **Македонова** — десятнике, Ухман ялсоветне кĕрекен «Победа» колхозри колхознике.

44. Акулина Николаевна **Николаевăна**—çĕр чавакана, Шăхасан ялсоветне кĕрекен Калинин ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна.

45. Мария Николаевна **Николаевăна**—çĕр чавакана, Ухман ялсоветне кĕрекен «Алешово» колхозри колхозницăна.

46. Николай Трофимович **Трофимова**—бригадира, Энтриел ялсоветне кĕрекен «Пинер» колхозри колхознике.

47. Василий Фадеевич **Фадеева**—çĕр чавакана, Шăкĕр ялсоветне кĕрекен «Красный пахарь» колхозри колхознике.

Красноармейски район тăрăх

48. Домна Антоновна **Антоновăна** — çĕр чавакана, Байсубино ялсоветне кĕрекен Молотов ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна.

49. Нина Григорьевна **Григорьевăна**—çĕр чавакана, Янгас ялсоветне кĕрекен Степан Разин ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна.

50. Никифор Григорьевич **Григорьева**—çĕр чавакана, Албахтино ялсоветне кĕрекен «Партизан» колхозри колхознике.

51. Афанасий Герасимович **Герасимова**—бригадира, Янчелă ялсоветне кĕрекен «Победа» колхоз председательне.

52. Семен Данилович **Данилова** — бригадира, Байсубино ялсоветне кĕрекен Молотов ячĕпе тăракан колхозри колхознике.

53. Сидор Дмитриевич **Дмитриева**—çĕр чавакана, Упи ялсоветне кĕрекен «Янмурзино» колхозри колхознике.

54. Кирилл Захарович **Захарова**—прораба, Хозаккасси ялсоветне кĕрекен «Пятилетка» колхоз председательне.

55. Александр Никандрович **Никандрова**—çĕр чавакана, Янчелă ялсоветне кĕрекен «Победа» колхозри колхознике.

56. Иван Петрович **Петрова**—бригадира, Типçырма ялсоветне кĕрекен Димитров ячĕпе тăракан колхозри колхознике.

57. Алексей Тихонович **Тихонова**—бригадира, Типçырма ялсоветне кĕрекен «Чăмăш» колхозри колхознике.

58. Нина Яковлевна **Яковлевăна**—çĕр чавакана, Албахтино ялсоветне кĕрекен «Партизан» колхозри колхозницăна.

59. Нина Яковлевна **Яковлевăна**—çĕр чавакана, Типçырма ялсоветне кĕрекен «Чăмăш» колхозри колхозницăна.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн Ĕçĕсене туса пыраканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1941 çулти декабрĕн 17-мĕш.

Совет информаци бюровĕнчен

Декабрĕн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ вĕçĕ

* * *

Калинин хулишĕн анăçĕнче чугун совет войскисем немĕçсен Видгоф генералăн 86-мĕш пехотăлă дивизине, Зехерт генералăн 110-мĕш пехотăлă дивизине, Риттау генералăн 129-мĕш пехотăлă дивизине, Вилк генералăн 161-мĕш пехотăлă дивизине, Франке генералăн 162-мĕш пехотăлă дивизине, Бурда генералăн 251-мĕш пехотăлă дивизине çĕмĕрсе таяпă.

* * *

Танксен пĕрремĕш гвардейски бригадинчи лейтенант Матяж юлташ хăйĕн танкĕпе кĕтмен çĕртен Каминка ялне кĕрсе кайнă та пулеметран персе фашистсене 30 çынна ытла вĕлернĕ, гусеницăсемпе талтаса 10 орудие, танксене хирĕç пемелли пĕр туппа путарса лартнă тата тăшманăн икĕ танкне, пĕр ывăр орудине çĕмĕрнĕ.

* * *

Крымри партизансен отрячĕсем нимĕç оккупантчĕсенчен ирĕке кăларнă Мускав облаçĕнчи ялсемпе хуласенче пурăнакансем немĕрсен фашистла çынраснăсен тискер ĕçĕсем çинчен тата вĕсем массăллăн çаратни çинчен каласа парасçĕ. Баранцево, Каретовка, Бакеево, Еременево, Адуево, Сокольники тата ытти нумай ялсенче немĕçсем халăхран вылăх-чĕрлĕхе, чăх-чĕпсене, тумтирсене, мĕнпур çăнăха, аш-какая, пĕçерни çăкăра туртса илнĕ. Çаратнине, алхасниче тата ирĕксĕрленине хирĕç тăма пăхнă çынсене фашистсем пĕр шеллемесĕр пере-пере вĕлернĕ. Еременево ялĕнче кăна фашистла тискер кайăксем Прокопий Завирошкина, Мария Завирошкина, Анна Макаровăна, Сергей Страхова тата Екатерина Силинăна персе вĕлернĕ. Рождествено тата Жевнево ялĕсенче гитлерла çынсиенсем 66 çултă колхозника Семирикова тата 70 çултă колхозника Майорова персе вĕлернĕ. Артиллерирен тата пулеметран вăйлăн персе тăнă çĕртех Олунин тата Мельников колхозниксене çунасемпе немĕçсен малти позицийĕсем патне апатçимĕç турттарма хушнă. Давыдов колхозникăлле çăматтине хывса илнĕ те строительствăра çара уран ĕçлеттернĕ. Каменка ялĕнче немĕçсем Никита Адубовский колхозника красноармеец пилемне тăхăнса çӳренĕшĕнех персе вĕлернĕ. «Общественник» колхозра пурăнакан Ковалина çапла каласа парать: «Ылханлă немĕçсем манăн çурта йышăнчĕç те мана 4 ачапа пĕрле сивĕ çĕре хăваласа кăларчĕç. Эпĕ ачасемпе пĕрле окопра хӳтлĕх тупма хăтланса пăхрăм, анчах ирĕр немĕçсем унтан та хăваласа кăларчĕç. Манăн 9 çултă хĕрачана вăл пӳрте ăшăнма кĕнĕшĕнех немĕç салтакĕ персе пăрахрĕ, манăн чĕтĕ ӳмекен ача алăрах сивĕпе шăнса вилчĕ».

* * *

Германи тата Италри оккупантчĕсем Грецирен мĕнпур продовольстви запасĕсене, çĕрмамăк, табак тата типĕтнĕ сырла-çимĕçсене хăйсем патне пухса илсе каласçĕ тесе пĕлтернĕччĕ Совет Информаци Бюровĕ декабрĕн 13-мĕшĕнче. Германин информаци бюровĕ декабрĕн 16-мĕшĕнче çакна ирĕлĕçрех йышăнса, ялхуçалăх продукчĕсене чăнах та «Грецирен нумай» турттарса кайма тивет, тесе çырать. Греци халăхне куçĕкреткĕнех çаратса тăлине фашистсен пропаганди çапла каласа тӳрре кăларма хăтланать: «Çĕрмамăк, табак тата типĕтнĕ пахча-çимĕçсем Греци яланах ютçĕршывсене ярса тăнă, мĕншĕн тесен вĕсене Грецире хăйсен кирлĕ шутран тем чухлех ытлашши туса хатĕрленĕ», тет. Çакăн çумне çапла çеç хушса калама тивет: оккупацилеме çĕршывсене çаратма ăсталанса çитнĕ нитлерсенсем Грецире ытла та вăйлă ĕçлесă, вĕсен ĕçне шула Греци халăхне ыйăпа силсе пĕтсе шăпа умне тăратса хăварнă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

ИТАЛИ САЛТАКĔСЕМ МĔН КАЛАСА ПАРАÇÇĔ

Нумаях та пулмасть фашистсенчен тасатнă Донбасри пĕр поселока Хĕрлĕ Çарăн часĕсем пырса кĕнĕ. Поселокра немĕçсемпе итальянецсем пулнă. Пăшалсенчен кăштах перкеленĕ хыççăн итальянецсем позицисене пăрахса тарнă. Хăйсен «союзникĕсем» çакăн пек хăтланнишĕн шăртланса кайнă немĕçсем вĕсем çине автоматсенчен пеме пуçланă. Анчах çакă та итальянецсене каялла позицие тавăрма пултарайман: вĕсем татах та хăвăртрах тарма тытăннă.

Гитлер кăтартса панă тăрăх Муссолини Хĕвелтухăç фронтне янă Итали салтакĕсем Совет Союзне хирĕç вăрçни хăйсене ыррине нимĕн те паманнине ытларах та ытларах ăнланса пыраççĕ. Тытса илнĕ ялсене те Итали салтакĕсем хăйсен кăмăлĕ туличчен çаратма пултараймаççĕ. Чи лайăх пурлăха немĕçсем ярса илеççĕ те хăйсен «тусĕсене» валли ăпăр-тапăр çеç пăрахса хăварасçĕ.

Нимĕç салтакĕсем итальянецсене кураймаççĕ, итальянецсем те çавнашкалах немĕçсене кураймаççĕ. «Мĕн тума илсе килмелле пулнă-ха кунта çав макаронисене! — тесе çырать нимĕç салтакĕ Иоахим Нагель хăйĕн пиччĕшĕ патне. — Пенĕ чухне вĕсем мулкачсем пекех тараççĕ. Кирек епле пулсан та, вĕсем вăрçă вăрçма мар, çулйĕр тума çеç юрăхлă».

«Итали халăхĕ немĕçсене кураймасть, —стенĕ допросра Итали капралĕ Вентуро Джованни. — Иртнĕ вăрçăра Италри Германие хирĕç вăрçнă, ун чухне немĕçсем пирĕн аттесене вĕлерипе пирĕнтен нумайĕшĕ манман-ха».

Çак икĕ документах ĕнтĕ немĕç салтакĕпе Итали салтакĕ пĕр-пĕрин çине мĕнле йĕрĕнчĕклĕн пăхнине кăтартса параççĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне курайманни кунран-кун вăйлансах пырать.

Гитлер вăрçăра хăвăрт çĕнтерӳ тума, пуян тупăша тивĕçлĕ валеçме сăмах панă. Анчах вăрçă вĕçĕ те, çавнашкалах тата пуян тупăш та курăнмасть-ха. Донбасс уйăхрĕсенче Италин пиншер салтакĕсем хăйсен пуçĕсене хума та ĕлкĕрчĕç. Чĕрĕ салтакĕсем те çавтери мĕскĕн пурнăçпа пурăнаççĕ. Шартлама сивĕ хĕл пуçланасси аякра-ха, анчах Итали салтакĕсем халĕ те шăннипе шăлĕсене шаккаççĕ, хăйсем тытса илнĕ ялсенчен çаратса тухнă одеялсемпе, палаткăсемпе, тирсемпе пĕркенсе лараççĕ. Тытăкăна лекнисем каласа панă тăрăх, Итали салтакĕсем хушшинче вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăл кунран-кун вăйлăланса пырать. Вĕсене фронта вăйпах хăваласа килеççĕ. Патакран хăранипе вăрçакан салтаксем — начар салтаксем ĕнтĕ.

3-мĕш кавалерийски полкăн тытăкăна лекнĕ салтакĕ Ломбардио Каспари çапла каласа пачĕ: «Италия вăрçастăн мар. Салтаксем вăрçастăн мар, вĕсем хăйсен тăван çĕршывне тавăрăнасси çинчен çеç шухăшласа пурăнаççĕ».

Итали салтакĕсен мĕншĕн фронта кайма тивнин сăлтавĕсем çинчен 3-мĕш кавалерийски полкăн рядовой салтакĕ Имортино Джованни çапла каласа парать:

—Муссолини пире, Гитлерпа калаçса татăлнă тăрăх, вăрçа хăваласа ячĕ. Муссолинине хирĕç кайма хăрушă, мĕншĕн тесен вăл мана хама та, манăн çемьене те тĕп тума пултарать.

— Сывăхра офицерсем çук чухне Итали салтакĕсем пĕр-пĕринпе мĕн калаçаççĕ? — тесе ыйтнă Джованнирен.

— Салтаксем хăйсем Россине хирĕç вăрçастăн марри çинчен нумай калаçаççĕ, мĕншĕн тесен Итали салтакĕн вырăс халăхĕпе çапăçма нимĕн сăлтав та çук. Россине хирĕç вăрçни Итали халăхне кирлĕ марри пире эпир пĕлетпĕр, — тесе ответ панă Джованни.

Çакăн пек ĕнтĕ Итали салтакĕн шухăш-кăмăлĕ.

Л. ЖЕЛЕЗНОВ.

(«Правда», декабрĕн 17-мĕш).

Нимĕç танкисчĕсем çапăçăва кĕмесĕр хăраса тарнă

Нимĕçсен «Пăлан пуçĕ» ятлă 296-мĕш пехотăлă дивизине аркатса тăкнă хыççăн пирĕн чассем çав дивизин юлашкийĕсене ăнăçлăн хăваласа пыраççĕ. Противник Ясная Поляна районĕнчен туринчен малта немĕçсен танксем тарса пынă, вĕсем хыççăн стреломсем чупнă. Танксен экипажĕсем ытла та васкаса тарнипе хăйсен машинисене пăсса пăрахма та ĕлкĕреймен. Пирĕн войскăсем тытса илнĕ 9 танкĕ те пĕтĕмĕшпех юсавлă, вĕсен бензин запасĕ те çителĕклĕ, боеприпасĕсем те туллиех. Çак танксен экипажĕсем хăйсен тивĕçлĕ вилĕмне ял хыçĕнчи лапамра тупрĕç.

Çакăн пек кĕрешӳ шухăш-кăмăлĕсем пусарăнса ларни немĕçсен фашистла çарĕнче юлашки кунсенче уйрăмах вăйлăн палăрать.

МИНСКИЙ.

(«Правда», декабрĕн 17-мĕш).

Таш̆манăн вăйĕсене
Клин хули патĕнче çапса аркатни

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, декабрĕн 16-мĕш. Нимĕçсем, Димитровпа Загорск Урлă Мускав çине татăклă наступлени шуçласа ярас шутпа, декабрь уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне Клин патĕнче пысăк вăйсем пухса тăратнă. Тăшман çурçĕр енчен инçетрен кĕрсе Мускава çавăрса илессипе хăратса тăнă. Çакăнтах, Клин патне, немĕçсем хăйсен иккĕмĕш эшелонне, пурнăçлă ытларах танксем илсе пынă. Рогачевпа Яхрома хулисене йышăнса илсе, тăшман вырăнĕ-вырăнĕпе Мускав — Атăл каналĕ урлă каçнă.

Пирĕн чассем тăшмана хаярăн хирĕç тăнă, анчах немĕçсен вăйăсем пирĕннипе ытларах пулнă пирки, пирĕн чакса пыма тиеннĕ. Декабрĕн 3-мĕшĕнче çеç пирĕн, Мускав—Атăл каналĕн хĕвелтухăçĕнчи сыранне каçнă немĕçсене пĕтерсе тăкса, канал сыранĕнчи рубежсенче çирĕплевсе ларма май килчĕ. Анчах обстановка питĕ йывăрланса çитрĕ. Немĕçсен Мускав çине çурçĕр енчен малалла наступлени туса пыма тата Мускава çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчен çавăрса илме лайăх условисем пулнă. Мускава çурçĕр енчи позицисенчен хӳтĕлекен войскăсене татса пăя уйăрас хăрушлăх уйрăмах вăйлăн тухса тăчĕ.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн умма Мускав—Атăл каналĕпе Яхрома юханшывĕ урлă каçса тăшманăн Рогачеври лайăх çирĕплетнĕ пысăк пунктне туртса илес, çапла вара хамăрăн чассене Клин çине наступлени тума кирлĕ условисем туса парас задачăна лартрĕç. Пирĕн тĕллев паллă: Рогачев—Клин районĕнче тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе тăкмалла, çапла вара немĕçсем Мускав çине наступлени пуçласа ума тунă. Клин тĕвинче (теприсем ăна Клинри плацдарм тесçĕ) аркатса пĕтерсе лартмалла.

Пирĕн чассем канал урлă каçрĕç те наступлени пуçласа ялмалли позицисене йышăнчĕç. Шăпах палăртса хунă вăхăтра—декабрĕн 6-мĕшĕнче — пирĕн войскăсем, атака тума тулăсенчен персе хатĕрлемесĕрех, татăклăн наступлени пуçласа ячĕç. Немĕçсем çак наступлени пĕртте кĕтмен. Яхрома юханшывĕнчен хĕвеланăç енчерехре лайăх çирĕплетнĕ темиçе пункт пулнă. Немĕçсем хирĕç тăнине пĕтерсе тăкма çăмăлах пулмарĕ.

Пирĕн Александровка, Васильево, Бунятино, Подвязново ялĕсем патĕнче хаяр çапăçусем пуçланса кайрĕç. Противник, хăй техника тĕлĕшпе (уйрăмах танксем тĕлĕшпе) вăйлăрах пулнă пирки тата вырăнăн юрăхлă условийĕсемпе усă курса, питĕ хаярăн хирĕç тăчĕ. Вăл кирек епле пулсан та Рогачев районĕнче тытăнса юлма пикенчĕ. Хаяр çапăçусем виçĕ кун хушши пычĕç. Халăх пурăнакан нумай пунктсем темиçе хутчен алăран алла куçтĕç.

Иванов генерал-майорăн часĕсене уйрăмах йывăр условисенче çапăçма тиврĕ. Ку чассем уçă вырăнта, çухе пăртак çеç витĕнме ĕлкĕрнĕ шурлăх урлă наступлени туса пычĕç. Çак чассенчи боецсем тăшмана хирĕç паттăрăн çапăçрĕç, немĕçсем темĕн пек вăйлăн персе тăнине шăхмасăрах, хăйсен хăюлăхĕпе, хастарлăхĕпе çĕнтерӳ туса пычĕç. Пирĕн артиллеристсем, уйрăмах Куйбышев командирăн часĕсем, тупăсенчен хăватлăн персе немĕçсене ялсенчен сирпĕте-сирпĕте кăларчĕç.

Эпир тăшман хаярăн хирĕç тăнине пĕтерсе пырса, унăн оборона линийĕсене тата-тата кĕрсе Рогачев патне пырса тухрăмăр та малалла наступлени тума тытăнтăмăр. Пирĕн кашни квартал ăшăн, кашни çурт ăшăн питĕ хаярăн çапăçма тиврĕ. Юлашкинчен тăшмана сирсе пăрахрăмăр та, эпир Рогачева пырса кĕтĕмĕр.

Рогачев вăл—немĕçсемшĕн тĕп пункт пулнă. Кунта, хулан хĕрринчи пайĕсенче, тăшманăн «хирĕç тăмалли тĕвĕсен» ретĕнчен тăракан оборонăн тупашĕнчи линийĕ, хула варринче—шалти линийĕ пулнă. Немĕçсем кунта тĕрлĕ чăрмавсем туса тухнă, çулсем çине минăсем лартнă, темиçе ĕлкре пралук картасем тытнă, кĕскен каласан, оборона валли кунта пур тĕрлĕ сооруженисем те, çав шутрах ДЗОТ-сем те, туса тултарнă. Противник темĕн тĕрлех хирĕç тăчĕ, мĕншĕн тесен вăл Рогачева çухатсан, Клин хули те каяссинне малтанах пĕлнĕ. Çав вăхăтра Кузнецов генералăн часĕсем Клин патне çывхарса пынă. Эпир ку участокри хамăрăн ĕçе тăшманăн Клинри мĕнпур вăйĕсене хупăрласа илнипе ăнăçлăн пĕçлерĕмĕр. Пирĕн войскăсем татăклăн та паттăрăн наступлени туса пынипе эпир, тăшмана Рогачевран çапса кăларса, Клин хулине кайма çул уçни çинчен маларахах каласаччĕ. Рогачева—тăшманăн лайăх çирĕплетнĕ пункт не—илни пирĕн чассен немĕçсене хирĕç кĕрешмелли опытне татах та пуянлатрĕ. Вара, эпир хамăрăн вăйсене Клин хули енне ятăмăр.

Лесопоженкопа Кузнецов генералсен войскисем хулана хупăрласа илчĕç. Тăшман хăйне, уйрăмах юлашки икĕ кун хушшинче, хытăрах та хытăрах хĕстерсе пыракан унка кирек епле пулсан та тытма тăрăшрĕ. Немĕçсем хăйсен танксене контратакăна кĕртекĕрте ячĕç, анчах пур çĕрте те вĕсене пирĕн артиллери вучĕ кĕтсе илсе пычĕ. Фюрст генералăн 14-мĕш мотопехотăлă дивизийĕн, фон-Веркштерн генералăн 86-мĕш мотопехотăлă дивизийĕн, 7-мĕш танковăй дивизин, Краузе полковникăн 900-мĕш учебăй бригадин çĕçем йывăрланнăçемĕн йывăрланса пынă. Тăшманăн горючи запасĕ сахалланăçемĕн сахалланса пынă; немĕçсем çул çине тухма хăтланса пăхнисем пĕри те ăнăçлă пулмарĕç. Ротмистров командирăн танкисчĕсем противникăн хирĕç тăмалли пункчĕсене тапăтса аркатса пычĕç, унăн Клинран тухса каймалли çулĕсене пӳлсе лартрĕç. Çав вăхăтрах тата пирĕн чассем йышăнса илнĕ ялсенчен тухса тарнă немĕçсен часĕсем тăтăшах Клин патне пырса тăраççĕ. Çапла ĕнтĕ Клин хули немĕçсемшĕн питĕ паха пункт пулса тăнă. Клина çухатсан, немĕçсем йăшă хваттерсенче выртса-тăрас, лайăх позицисене йышăнса тăрас шанчăка та çухатаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ тăшман Клин хулине çине тăрсах хӳтĕлерĕ.

Тăшман 220-мĕш высотана тытса илчĕ те, пирĕн наступление тытса чарас тесе пулас, çак высотана лартнă тупăсенчен питĕ вăйлăн пеме тытăнчĕ. Анчах пирĕн боецсем çак вут-çулăм хӳми урлă та каçрĕç. Пирĕн авиаци тăшманăн коммуникацийĕсем çине тата-сыпписĕр бомбăсем пăрахса тăчĕ, Клин патне пыма тăрăшакан резервсене салата-салата ятĕ, огневой точкăсене пĕтерсе пычĕ.

Клин тавăрăнчче пилĕк талăк хушши питĕ хаяр çапăçусем пулса пычĕç. Пирĕн войскăсем немĕçсене çурçĕр енчен, çурçĕр-хĕвелтухăç енчен, хĕвелтухăç енчен, кăнтăр-хĕвеланăç енчен, çурçĕр-хĕвеланăç енчен хупăрласа илчĕç. Ку операцисене пехотинецсем, кавалеристсем, танкистсем, артиллеристсем тата летчиксем хутшăнчĕç. Декабрĕн 15-мĕшне çитичченех немĕçсем хăйсен чĕрĕ вăйне те пулин çăлса хăварас тесе, каялла чакма çул уçма тăрăшрĕç. Анчах çапах та тăшман салтакĕсемпе офицерĕсем кунта 13 пин çын аманса е вилсе пĕтрĕç. Декабрĕн 14-мĕшĕнче çĕрле Люхтиковпа Чернышевăн часĕсем, немĕçе пĕлмесĕр тараканă немĕç салтакĕсене хăваласа пĕтерсе пырса, хулана çĕмĕрсе кĕчĕ те ăна йышăнса илчĕç.

Тăшман, вăй çитменнипе туртăрса кайма пултарайман пирки, хăйĕн танкĕсене, автомобильсене, тупăсене, хăйĕн мĕнпур техникине пăраха пăраха хăварнă. Немĕçсем Волоколамск шоссе çулĕ тăрăх чакаççĕ, декабрĕн 15-мĕшне 16-мĕш хушшинче вĕсене пирĕн чассем хăваласа пычĕç. Утлă çар часĕ немĕçсен тылне кĕрсе кайнă та, вĕсене чакнă чухне пĕтерсе пырать. Клинран Волоколамска каякан çул çинче немĕç салтакĕсен виллисем, танксем, тупăсем, автомобильсем, темĕн чухлĕ пурлăхĕсем сапаланса выртаççĕ. Çак пурлăха эпир пин çеç шута илсе йĕркеленĕ тытăнатпăр.

Пирĕн татах пысăк та йывăр задачăна пурнăçа кĕртмелле. Мускава çурçĕр енчен хăрушлăх кӳрсе тăнă, çак асăлă та илемлĕ хулана тытса илме пикенĕ немĕç оккупантчĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкмалла.

Эпир халь пурнăçа кĕртсе пыракан операцисем пирĕн участокра çак задачăна татса памалла. Пирĕн войскăсем хастарлăн çапăçаççĕ, вĕсен наступлени тăвас хавхаланăвĕ сехетрен сехете ӳссе пырать, пирĕн боецсем ялсенах çапăçăва кĕрсе кайма хатĕр. Халь Волоколамск енне лла чакса пыракан немĕç дивизийĕсене пирĕн Хĕрлĕ Çар часĕсем пĕр хут çеç мар пыра-пыра вăйлăн çатрĕç.

Клина илни тата унта пухăнса тăнă немĕçсен вăйне аркатса тăкни, çакăнпа пĕр вăхăтрах Ленинграда каймалли шоссене ирĕке кăларни, тăшманăн Клинри тĕвинне пĕтерсе тăкни пулать. Халь ĕнтĕ немĕçсене çак шоссе çинчен хăваласа ятăмăр, пирĕн чассем вĕсене хăваласаççĕ.

Артиллери генерал-майорĕ Г. ХЕТАГУРОВ.

(«Правда», декабрĕн 17-мĕш).

Лăпкă океанри вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 17-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен флотĕн командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Япони авиацийĕ Уэйк утравĕ çине икĕ хутчен пырса бомбăсем пăрахнă. Вĕсенчен пĕринче пит те вăйлăн талăннă. Утрав çинчи çар гарнизонĕ тăшмана хирĕç кĕрешме пăрахман-ха. Америкăн подводнăй лодкисем декабрĕн 16-мĕшĕнче икĕ хутчен ăнăçлă атакăсем тусса ирттернĕ.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 17-мĕш. (ТАСС). Официальнăй пĕлтерӳсем тăрăх, юлашки талăксем хушшинче Японин çар карапĕсем Джонстон тата Мауи утравĕсем çине (Гавай утравĕсем хушшинче) бомбăсем пăрахнă.

Америкăн бомбардировщикĕсем Япони карапĕсем çине çĕнĕрен тапăнма пуçланă, Японин вăрçă хатĕрĕсем турттараканă пароходсенчен пĕрине хытах сиенленĕ.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕш. (ТАСС). Англи хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Кăнтăр Бирмăра Япони çарĕсем, Пакхан юханшывĕпе унăн киве çыранĕсем урлă каçса, малалла, çурçĕр еннелле куçаççĕ.

Кедах районĕнче хаяр çапăçусем пырасçĕ. Англи авиацийĕ кунта Японин фронт патне вăрçă хатĕрĕсем турттарса пыракан колоннисене атакăлать. Фронтăн пур пункчĕсене те японецсем юлашки икĕ кун хушшинче вăйлă çар часĕсем илсе пынă. Малайăра тăракан Японин войскисенче ку вăхăтра 50 пин çын таран шутласать. Англи войскисем кунта ăшшах мар, çапăнпа та вĕсене Японин пысăк çар часĕсенте хирĕç тăма ывăр пулать, тесе шутласçĕ.

Англи авиацийĕ иртнĕ кун хушшинче кунĕпех разведкăллă вĕçĕсем туса ирттернĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Япони çарĕсем Гонконгран 80 километрта кăнтăр-хĕвеланăç еннелле тăракан Макао утравне ăшăнса илнĕ (Макао—Португали аллинче тăракан утрав шутланать).

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, декабрĕн 17-мĕш. (ТАСС). Официальнăй пĕлтерӳсем тăрăх, Гонконг патĕнчи çапăçусенче Японин флочĕ, тип-çĕр çинчи çар вăйăсемпе пĕрле кĕрешсе, 6 торпедăлă катера путарнă, пĕр миноносеца пысăк сиен кӳнĕ тата икĕ торпедăлă катерпа пĕр пысăк парохода сиенленĕ.

Японин çар карапĕсем тупăсенчен пенипе Бенис фортне нумай çĕмĕрсе тăкнă тата ытти укрепленисене те сиенленĕ. Гонконга сывлăшран тата тинĕсĕрен тапăнас вăрçă операцийĕсем çаплах пулса пыраççĕ.

Декабрĕн 16-мĕшĕнче Японин флочĕ Джонстон утравне тата декабрĕн 14-мĕшĕнче Бэйнер утравне (Лăпкă океанра) пырса атакăланă.

Германи хаçачĕ нимĕçсене Ростов патĕнче аркатса тăкнишĕн кӳренсе çырать

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 17-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсем чуралантарнă Бельгире тухса тăракан Германи хаçачĕ «Брюсселер цейтунг» нимĕçсем Ростов патĕнче чакни çинчен кӳренсе çапла çырать: çĕнтерӳсем тума хăнăхнă Германи халăхĕн халь ĕнтĕ каялла чакнине килĕшмелле. Германи войскисем Ростов патĕнчен чакни çинчен калакан хыпар пиллесен Германире нимĕн тăвас килмен шухăш-кăмăл палăра пуçларĕ, тесе ирĕксĕрех йышăнать хаçат. Кунсăр пуçне, «Брюсселер цейтунг» Ростов патĕнчи событисем Германишĕн кризис вăхăчĕ пулчĕ, тесе палăртать. Анчах та Германи çак кризиса, катастрофăна мар, чăтса иртерĕ, тесе лăплантарать хаçат хăйне хăй. Хăрушă кризис Германире катастрофа тума пултарать, тесе йышăнать хаçат. Çав вăхăтрах нацистсен органĕ Германире халăхăн чылаях пысăк пайĕ пăшăрханма пуçланине пытарса хăварма пултараймасть. Германи халăхĕшĕн питĕ пысăк кризис пуçланчĕ: кĕтмен çавтери пысăк вăрçа.

Итали хаçачĕ „Джорнале д' Италия" Хĕвелтухăç фронтĕнчи йывăрлăхсем çинчен

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 16-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк Таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Италире тухса тăракан «Джорнале д' Италиа» хаçатăн Хĕвелтухăç фронтĕнчи корреспонденчĕ итальянецсен фронтра питĕ пысăк йывăрлăхсемпе тĕл пулма кирли çинчен çырать. «Вырăссем,—тесе çырать çак корреспондент,—çавтери паттăрăн çапăçакан тăшмансем». Итальянецсен тĕпĕр питĕ хăрушă тăшманĕ—партизансем пуласçĕ. Вĕсем итальянецсемшĕн пысăкрах та пысăкрах хăрушлăх пулса пыраççĕ. Çавнашкалах тата итальянецсене сивĕ хĕл те хăратать. «Нью-Йорк Таймс» хаçат çапла палăртать: Германи хаçачĕсем Хĕвелтухăç фронтĕнчи вăрçă ĕçĕсем лăпланса пыни çинчен сыраççĕ пулсан, Итали журналисчĕсем вара, йăлтах урăхла, Донбасс патĕнчи хаяр çапăçусем çинчен сырса пĕлтереççĕ.

Нимĕçсен аманнă салтакĕсем нумай вилеççĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕш. (ТАСС) Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, аманнă нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем питĕ нумай вилсе пĕтеççĕ. Варшавăпа унăн таврашĕнче хĕвелтухăç фронтĕнче аманнă пирки вилнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пытарма çĕнĕ масарсем тунă.

Шанчăклă сведенисем тăрăх, пĕр Варшава округĕнче çеç 10 масар тунă. Испани «кăвак» дивизийĕн салтакĕсемпе офицерĕсем татах та ытларах вилеççĕ. Испанирен килнĕ «доброволецсем» хăйсен суранĕсем пирки çеç мар, тата вырăс çĕршывĕнчи хаяр сивĕ хĕле чăтайман пирки те, ӳпке чирĕсемпе чирлесе вилеççĕ.

Чехословакия тĕнĕл çĕршывĕсене хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕш. (ТАСС) Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Чехословаки хабинечĕн декабрĕн 16-мĕшĕнче Лондонра пулса иртнĕ чрезвычайнăй ларăвĕнче президент Бенеш тата ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Шрамек ялă пуснă декларацине вуласа панă. Çав деклараци тăрăх, Англие, ССР Союзне тата США-на хирĕç кĕрешекен тĕнĕл çĕршывĕсене хирĕç Чехословакия вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернĕ.

Австралия Японие, Финляндие Венгрие тата Румыние хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕш. (ТАСС). Австралия Японие, Финляндие, Венгрие тата Румыние хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернине Австрали парламенчĕ ырланă. Парламент Австрали территорине хӳтĕлеме кирлĕ ĕçсене пурне те туса пыма тата татăклă çĕнтерӳ тăвичченех союзниксемпе пĕрле тăрса кĕрешме сăмах панă.

Генерал Вл. Сикорский Тегерана пырса çитни

ТЕГЕРАН, декабрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Паян ССР Союзĕнчен самолетпа Польша республикин Министрсен Совечĕн Председателĕ тата Польшăн хĕçпăшалă вăйăсен главнокомандующийĕ генерал Вл. Сикорский Тегерана çитнĕ.

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене илеççĕ

ШУПАШКАР. «Красный кустарь» артельте ĕçлекенсем укçа-тенкĕ тата япала лотерейин билечĕсене илме хавасланса сыпăнаççĕ. Вĕсем 2520 тенкĕлĕх сыпăнчĕç. Артель конторинче ĕçлекенсем 410 тенкĕлĕх сыпăнчĕç.

М. СМЕТАНИН.

* * *

ÇĔРПУ. Укçа-тенкĕ тата япала лотерейин билечĕсене районри ĕççыннисем хушшинче 46.880 тенкĕлĕх сарнă. Вăл шутран 8 пин тенкĕ укçине тӳлерĕç. Лотерея билечĕсене сарасси йĕкĕрвар ялсоветĕнче лайăх пулса пырать. Кунти колхозсем пурĕ 4100 тенкĕлĕх сыпăнса, укçине те йăлтах тӳлесе тăнă.

Г. ПЕТРОВ.

* * *

ИШЛЕЙ. Районри учительсем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене пысăк хаваслăхпа сыпăнса илеççĕ.

Мăкăш туллимар вăтам шкулĕнчи учительсем лотерея билечĕсене 690 тенкĕлĕх сыпăнчĕç. Вăл шутран Конратьевпа Худякова 100-шер тенкĕлĕх, Архангельская—90 тенкĕлĕх, Красновăпа Сорокина толташсем 80-шар тенкĕлĕх, Трофимов—60 тенкĕлĕх, Егоров—70 тенкĕлĕх, Михайловăпа Макарова 50-шар тенкĕлĕх сыпăнчĕç.

Хачăкри пуçламăш шкулти учительсем 130 тенкĕлĕх сыпăннă.

А. НИКОЛАЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сыруçемпе рабселькоров пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7380

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 651. Ф. б. 58. 84 п. л.